28-мĕш сул тухать. Хаклă 20 пус.

1945 ИЮЛЬ 15 ВЫРСАРНИКУН 135(t886)№

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Ватăрах çынсене çартан киле ярасси çинчен йышăннă закон пурнăçа кĕме тытăнчĕ

СССР Верховный Совечĕн XII-мĕш Сессийĕ «Ватăрах çынсене Çапăçури Çартан киле ярасси çинчен йышăннă закон» пурнăçа кĕме тытăнчĕ. Тăван çĕршыва хӳтĕлекенсем—çĕнтерӳллĕ аслă саран воинсем эшелонĕ-эшелонĕпе киле таврăнаççĕ. Киле таврăнакансен малтанхи эшелонĕсем Мускава, Ленинграда, Ростова çитрĕç. Çĕнĕре, Урала, пирĕн çĕршывăн тата ытти вырăнсенче те эшелонсем калаççĕ. Пур çĕрте те фронтовиксене хавасланса, хапăл туса кĕтсе илеççĕ, вĕсене чи сывăх тăвансем вырăнне хурса, халăхран ĕмĕр-ĕмĕр тав илсе тăма тивĕслĕ геройсем вырăнне хурса йышăнаççĕ.

Киле, тăван ял, тăван хулана! Вăрçă вăхăтĕнче мĕн тери кумханса шутлăй фронтовиксем çаван çинчен! «Сире Çĕнтерӳпе кĕтетпĕр», çырнă вĕсем патне тăванĕсемне тусĕсем. Халĕ ĕнтĕ çĕнтерӳпе çапăçса илнĕ. Мĕнле çĕнтерӳ! Вăрçăсен историйĕнче унпа пĕртан çĕнтерӳ пулман та. Тăшмана аркатса тăкнă, ăна чĕркуçси çине лартнă, вăл парăнчĕ. Пирĕн çĕршыва тата пĕтĕм этемлĕхе хăратса тăнă чи пысăк хăрушлăха пĕтерсе тăвăç. Совет воинĕсем киле мирлĕ ĕç тума, хăйсен тăван çемьисем патне таврăнаççĕ. Вĕсем хăйсен умне Тăван çĕршыв казарса тăратнă тивĕçе мухтавлăн пурнăçа кĕртнине пĕлсе таврăнаççĕ. Вĕсем хăйсене киле мĕн тери кĕтнине пĕлеççĕ, хăйсен ĕçсĕлми вăй-хăватне заводри, колхозри, наука учрежденийĕнчи ĕçе тума васкаççĕ, социализмлă Тăван çĕршывăнăн малашне те чун-чĕререн парăнса, ăна шеллемесĕр ĕçлес кăмăлпа, унăн вăй-хăвачĕпе мухтавлăхне йышлатас кăмăлпа çунаççĕ.

СССР Верховный Совечĕн XII-мĕш Сессийĕ ватăрах çынсене киле ярасси çинчен йышăннă закон Совет правительстви Тăван çĕршыва хӳтĕлекенсемшĕн сталинла тăрăшнине кăтартса парать. «Ку закон политикăллă сулĕр парать, выраннă власть органĕсемпе колхоз правленийĕсен киле таврăнакан воинсене киле хăвăртрах вырнаçма тата мирлĕ строительство ĕçне хутшăнма мĕншăн вăйпа тата меслесемпе пулăшмалăпине кăтартса парать» (Калинин). Закон çартан таврăнакансене хăвăртрах та организованно киле илсе çитерме, вĕсене кирлĕ пек тумлантарма, çул çинче тăрантарма, тивĕçлĕ пулăшу пама хушать. Закон киле таврăнакан çынна пĕтĕм халăхăн творчествăллă ĕçĕнче, хăйĕн вăйне, пĕлĕвĕне пултарулăхне кура, тивĕçлĕ вырăн шыраса тупса йышăнма май парать. Законăн пĕр статйинĕ киле таврăнакансене ĕçе вырнаçтарнă чухне вĕсем Хĕрлĕ Çарта илнĕ опыта шута илме хушать, вĕсене çара хăйнччен ĕçленĕ вырăнтан пĕчĕкрех вырăна лартма юраманнине çинчен асăрхаттарать. Çаван пек статья тĕнчери законсенче урăх çук. Совет государствинче çĕç, социализмлă система условийĕнче çĕç Тăван çĕршыв умĕнче хăйĕн тивĕçне тӳрĕ кăмăлпа тата мухтавлăн пурнăçа кĕртсе пыракан çынсемшĕн çаван пек тăрăшаççĕ.

Совет законĕнче киле таврăнакан воинсен нушисемпе интересĕсене пурне те тĕплĕн шута илнĕ. Халĕ ĕнтĕ мĕншăн ĕç—киле таврăнаканнисем те, вĕсене вырнаçтарас ĕçе туса пыма хушнă органсем те мĕн тери организацияллĕ тата дисциплинăллă пулнинчен, законăн каштни статьине, законăн каштни сăмахне тĕп-тĕрĕс те нимĕн пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пынинчен, вырăнти власть органĕсен, хуçалăхпа обществăллă организацисен руководителĕсен пуçарулăхĕнчен килет. Вырăнти парти организацийĕсен çав пуçарулăха ертсе пымалла, киле таврăнакансене кĕтсе илессине тата вырнаçтарассине хăйсен тĕп ĕçĕ вырăнне хумалла.

Çартан киле ярасси пуçланчĕ çеç пулсан та, киле таврăнакан воинсене тĕплĕн тата пуçарулăн кĕтсе илнин, вĕсене пулăшнин тĕслĕхĕсене темĕн чухлех кăтартса пама пулать.

Сăмахран, Мускав облаçĕнчи Ленински районри Коломенское ялĕнчи колхозниксем киле таврăнакансене пулăшма колхозри пулăшу кассинче ятарласа фонд тунă, продуктсем, выльăх-чĕрлĕх уйăрнă, сурти-йĕр юсама, хăшпĕрисене çĕнĕрен туса пама, вут-ханкă хатĕрлеме палăртса хунă.

Пирĕн Тăван çĕршывăн столици çартан таврăнакан воинсене пулăшма тĕплĕн хатĕрленет. Мускав Совечĕн депутачĕсем çар сыннисен çемьисен пурнăçĕпе паллашаççĕ. Сăмахран, Советски районра вĕсем 1800 хваттере тĕрĕслесе тухнă, вĕсем сĕннĕ тăрăх, предприятисемпе учрежденисем темиçе пин хваттер юсама тытăннă. Бауман районĕнче 647 хваттер юсама йышăннă. Нумай районсенче çартан киле таврăнакансене вăхăтлăха вырнаçтарма общежитисем тăваççĕ. Мускава таврăнакан пур воинсене те ĕç туписа параççĕ. Киле таврăнакан воинсене ĕçе вырнаçтарас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссисене предприятисемпе учрежденисенчен, киле таврăнакан воинсене ĕçе ямă ыйтса, заявкăсем пыма тытăннă. Ленинграда киле таврăнакан фронтовиксем валли хваттерсем васкасах юсаççĕ, хваттер суккисем валли вара вăхăтлăх общежитисем тăваççĕ. Ленинградри профсоюз организацийĕсем киле таврăнакан воинсем валли Карельски перешеекри, Киров утравĕсем çинчи санаторисемпе канмалли çуртсенче вырăнсем хатĕрлесе хунă. Бакура укçа, промышленность таварĕсем тата апат-çимĕç парса пулăшма фондсем тунă, Азербайджан столицине таврăнакан воинсем валли хваттерсем хатĕрлесе хунă. «Азнефть» пĕрлешĕвĕ киле таврăнакан фронтовиксен квалификацине ӳстерме е квалификаци илме курссем уçать. Горький облаçĕнчи пумай колхозсенче фронтовиксен çемьисене выльăх-чĕрлĕх парса, хăйсен вăйĕпе пиншер машăр атă-пушмак хатĕрлесе парса, хуçалăхра кирлĕ ытти япаласем парса пулăшма йышăннă.

Тăван çĕршыва сыхлакансемшĕн халăх хăйĕн пуçарăвĕпе çаван пек тăрăнин тĕслĕхĕсене темĕн чухлех кăтартса пама пулать. Çак тĕслĕхсем вĕсем СССР Верховный Совечĕн Сессийĕ йышăннă закон пĕтĕм халăх ирĕкĕ пулнине кăтартса параççĕ. Пирĕн пĕтĕм халăх хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕн, никама пăхăнманлăхĕшĕн тата чыслăхĕшĕн мĕншăн вăйне тата юнне шеллемесĕр кĕрешнĕ воинсене тивĕлипе кĕтсе илсе йышăнма тăрăшать. Пирĕн халăх çапла тума тăрăшать: фронтовиксем хăйсене юратнине, тав тунине туллин туйса тăчăр, пирĕн хаклă Тăван çĕршывăн хăватлăхне малалла çирĕплетес тĕлĕшпе хăйсен вăйĕпе пултарулăхне туллин хума май пурринне пĕлсе тăчăр.

Пĕр полкăн командирĕ, Çĕнтерӳ ялавне Берлин çине çĕклесе лартнă полкăн командирĕ, киле каякан боецсемпе сывпуллашса, вĕсене çакăн пек сăмахсемпе ăсатса янă:—Эсир Тăван çĕршывăн лайăх ĕçлерĕр. Эсир Çĕнтерӳ вут-сулăмĕ витĕр мĕншăн Германи тăрăх тухрăр, Эсир Берлин хулине штурмласа илтĕр. Халĕ, Çĕнтерӳ хыççăн, Тăван çĕршыв Сире киле, хăвăрăн çемьĕрсем патне, арăмусемпе ачусем патне тавăрать. Заводсемпе фабрикăсенче, колхоз уйăхĕсенче, вăрçăра çапăçнă пекех, тăрăшса лайăх ĕçлĕр...

Тăван çĕршывăн мухтавлăн çапăçнă, хăйсен вăй-хăватне мирлĕ строительство ĕçне те мухтавлăн пама тăрăшакан воинсене тивĕлипе кĕтсе илесси—каштни хулапа ялăн, каштни предприятин, учрежденин, колхозăн чыслă ĕçĕ пулса тăрать. Çакă ĕнтĕ фронтпа тыл пĕрлĕхне, çарпа халăхăн ĕмĕр арканми аслă пĕрлĕхне, большевиксен партийĕ, Сталин юлташ тунă пĕрлĕхе, пирĕн аслă çĕнтерĕвĕн никĕсĕ пулса тăракан пĕрлĕхе çĕнĕрен хăватлăн кăтартса пани пулать!

(«Правда» хаçатăн июлĕн 14-мĕшĕнчи умăтьи).

Çĕнтерӳçĕ-воинсене тивĕслипе кĕтсе илессишĕн

ВĂРНАР. (Хăмăр юрр). СССР-ăн I-мĕш созыври Верховный Совечĕн XII-мĕш Сессийĕ ватăрах çынсене Çапăçури Çартан киле ярасси çинчен закон йышăнчĕ. Çапăçури Çартан килекен çĕнтерӳçĕ-воинсене кĕтсе илесси—пысăк та ответлă ĕç. Çакна шута илсе, районри ĕçсăмахсем киле таврăнакан воинсене кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Ку тĕлĕшпе ВКП(б) райкомĕн бюровĕпе райсовет исполкомĕ ятарласа ыйту лартса сӳтсе-явнă, çартан килекенсене лайăх кĕтсе илес тĕлĕшпе тĕрлĕ ĕçсем тума палăртса хăварнă.

Çартан киле таврăнакансене кĕтсе илес тĕлĕшпе чугун çул вокзалĕнче ĕçлеме районри парти активĕнчен 10 çын ответлă дежурнăйсем уйăрнă. Воинсем поезд çинчен ансан канма вокзалта уйăрăм пулĕм пур. Унта политикăллă-массăллă ĕçе туса пыма коммунистсенчен икĕ агитатор уйăрнă. Пулĕмре тĕрлĕ хаçат-журнал, кĕнекесем пумай.

Çартан килекен воинсем валли поезд çинчен ансан çĕр каçма Колхозник çуртĕнче койкăсем уйăрса хунă. Вĕсене хăйсен киле хăвăртрах çитерме районри предприятисемпе учрежденисем пĕр автомашина тата 8 лаша уйăрса, райвоенкомата çирĕплетсе панă. Çĕнтерӳçĕ-воинсене кĕтсе илме колхозсенче те тăрăшса хатĕрленеççĕ. Колхоз правленийĕсем яла çитнĕ воинсене пулăшма продуктсемпе укçа-тенкĕсем уйăрса хураççĕ, ĕçе вырнаçтарма вырăнсем палăртаççĕ. Кашни колхозрах дежурнăй лашасем пур.

Е. ВОЛКОВ.

Чăваш республикинчи сыхану работникĕсене иккĕмĕш преми панă

ВЛКСМ-па Сыхану Халăх Комиссариачĕ. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн июнь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Чăваш республикинчи сыхану работникĕсене иккĕмĕш преми—50 пин тенкĕ пама йышăннă.

Ĕçсынни депутачĕсен райсовечĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне ăнăçлă туратнăшăн тата выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстернĕшĕн малта пыракан сан колхозсемпе колхозникисене республикăри ХИСЕП ХĂМИ сине кĕртнĕ:

УЛАТĂР РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

71. **Чăлăш ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **Кутяев** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планă лашасем енĕпе 137 процент, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 106 процент, сыснасем енĕпе 120 процент, сурăхсем енĕпе 109 процент тултарнă.

72. **«Красное Анютино» колхоз** (председателĕ **Киреев** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планă майракаллă шултăра выльăх енĕпе 106 процент, сыснасем енĕпе 110 процент, сурăхсем енĕпе 124 процент тултарнă.

КАЛИНИНО РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

73. **Коминтерн ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **И. Г. Гаврилов** юлташ, ферма заведующийĕ **А. М. Михайлов** юлташ, лаша ĕрчетес ĕçĕн заведующийĕ **Ласкина** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планă лашасем енĕпе 100,5 процент, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 100 процент, сыснасем енĕпе 104 процент, сурăхсем енĕпе 114 процент тултарнă, 14 кĕсререн 14 тиха илсе сыхласа хăварнă. Государствăна султа лăкăшăн 84 процент аш-какай панă.

74. **«Красноармеец» колхоз** (председателĕ **Н. Н. Смелов** юлташ, ферма заведующийĕ **Трофимов** юлташ, старши конюх **Захаров** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планă лашасем енĕпе 104 процент, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 119 процент, сыснасем енĕпе 100 процент, сурăхсем енĕпе 186 процент тултарнă. Государствăна султалăкшăн аш-какай 110 процент панă.

75. **«Новая жизнь» колхоз** (председателĕ **Д. И. Угнеев** юлташ, ферма заведующийĕ **Федотова** юлташ, старши конюх **Щукин** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планă лашасем енĕпе 112 процент, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 116 процент, сыснасем енĕпе 110 процент, сурăхсем енĕпе 118 процент тултарнă. 19 кĕсререн 19 тиха илсе сыхласа хăварнă.

76. **Каганович ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **Иванов** юлташ, ферма заведующийĕ **Шуршина** юлташ, старши конюх **Иванов** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планă лашасем енĕпе 102 процент, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 111 процент, сыснасем енĕпе 169 процент, сурăхсем енĕпе 125 процент тултарнă. 27 кĕсререн 20 тиха илсе сыхласа хăварнă.

77. **«Броневик» колхоз** (председателĕ **В. В. Смирнов** юлташ, ферма заведующийĕ **И. А. Алексеев** юлташ, старши конюх **Волков** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планă лашасем енĕпе 100 процент, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 103 процент, сыснасем енĕпе 104 процент, сурăхсем енĕпе 106 процент тултарнă. Государствăна султа лăкăшăн 65 процент аш-какай панă.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АССР-ĕнчи колхозниксемпе колхозницăсене, промышленность, культура тата искусство работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Чăваш АССР-ĕ 25 сул тултарнă май, ялхуçалăхне, промышленноçа, культурăна тата искусствăна аталантарас тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсемшĕн çаксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

УЛАТĂР РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

1. Пантелей Гаврилович **Акимова**—Алтышевăри вăрманпромхозĕн вăрман пунктĕнчи мастерне.

2. Алексей Михайлович **Боляжинова**—Эпеç вăрман пункчĕн начальникне.

3. Валентина Осиповна **Косолаповăна**—Улатăрти çыхăну конторин телефонисткине.

4. Михаил Яковлевич **Кузнецова**—ВКП(б) Улатăр райкомĕн пропагандăпа агитации отделĕн заведующине.

5. Николай Андреевич **Морозкина**—Чуварлейри вулав çурчĕн заведующине.

6. Любовь Андреевна **Паксяйкинăна**—ВЛКСМ Центральный Комитечĕн Улатăр вăрманпромхозĕ çумĕнчи комсоргне.

7. Ольга Ивановна **Прохоровăна**—«Заря» колхозри ĕне сăвакана.

8. Сергей Иванович **Рогушина**—Улатăр вăрман пункчĕн начальникне.

9. Серафима Григорьевна **Сульдинăна**—Атратьри вулав çурчĕн заведующине.

10. Мария Александровна **Титовăна**—Стемаски вулав çурчĕн заведующине.

11. Василий Федорович **Фролова**—Улатăрти çыхăну конторин начальникĕн заместительне.

УЛАТĂР ХУЛИ ТĂРАХ:

1. Иван Михайлович **Авдейчика**—Улатăрти 1-мĕш номер чугун çул училищин производствăна вĕрентекен мастерне.

2. Николай Яковлевич **Анеников**—Улатăрти горпромкомбинат управляющине.

3. Иван Алексеевич **Артаменова**—НКПС-ăн Улатăрти техникумĕн вĕренӳпе производство мастерскойĕн начальникне.

4. Екатерина Даниловна **Барановăна**—НКПС-ăн Улатăрти техникумĕн вĕренӳ мастерскойĕн шишельницине.

5. Анатолий Владимирович **Гафидова**—Улатăрти паровоз деповĕн слесарь бригадин бригадирне.

6. Петр Александрович **Короткова**—Хусан чугун çулĕн движенийĕ службин 3-мĕш отделенийĕн главнăй кондукторне.

7. Константин Михайлович **Корчагина**—Улатăрти 1-мĕш номерлĕ чугун çул училищин производствăна вĕрентекен мастерне.

8. Алексей Федорович **Макарова**—Улатăрти 1-мĕш номерлĕ чугун çул училищин директорне.

9. Александр Михайлович **Секачева**—Хусан чугун çулĕн 3-мĕш паровоз отделенийĕн начальникне.

ЭЛĔК РАЙОНĔ ТĂРАХ:

1. Илья Алексеевич **Алексеева**—Госбанкăн Элĕкри отделенийĕн управляющине.

2. Анатолий Иванович **Бочкова**—«Доброволец» колхозри колхозника.

3. Арсений Иванович **Золотова**—районри çутăç пайĕн заведующине.

4. Николай Иванович **Иванова**—МТС-ри старши агронома.

5. Иван Михайлович **Михайлова**—«Сунтал» колхоз председательне.

6. Феодосия Тихоновна **Тихоновăна**—«Большевик» колхозри колхозницăна.

ВĂРНАР РАЙОНĔ ТĂРАХ:

1. Игнатий Алексеевич **Алексеева**—МТС-ри трактор бригадин бригадирне.

2. Иван Архипович **Кисляков**—«Заготживсырьен» Вăрнар районĕнчи кантурĕн директорне.

3. Мирон Лукич **Лукина**—«Заря» колхоз председательне.

4. Иван Николаевич **Николаева**—МТС-ри трактор бригадин бригадирне.

5. Петр Ефимович **Николаева**—МТС-ри старши механика.

6. Игнатий Илларионович **Петрова**—лесосплав профсоюзĕн райком председательне.

7. Тамара Гордеевна **Петровăна**—райçĕрçĕ пайĕн старши зоотехникне.

8. Яков Семенович **Семенова**—Кăмашри Сталин ячĕпе тăракан колхоз председательне.

9. Иван Федорович **Федорова**—Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председательне.

10. Степан Федотович **Федотова**—Вăрнар вăрман хуçалăхĕнчи Вăрнар лесничествин лесникне.

11. Анисим Васильевич **Хлянова**—райсемхоз заведующине.

ЙĔПРЕÇ РАЙОНĔ ТĂРАХ:

1. Матвей Ильич **Ильина**—«Заря» колхозри утар заведующине.

2. Степан Николаевич **Кузнецова**—Йĕпреçри вăтам шкул директорне.

3. Гаврил Сергеевич **Лазарева**—çулăн 14-мĕш дистанцийĕнчи 7-мĕш околотокри çулĕр мастерне.

4. Сергей Осипович **Морозова**—Йĕпреç вăрман хуçалăхĕнчи Кушлавăш вăрман пунктĕнчи лесника.

5. Андрей Павлович **Павлова**—Йĕпреç вăрманпромхозĕнчи Дубровнăй лесопунктри вăрман касакана.

6. Григорий Павлович **Павлова**—Хуири Виçли ял Совет исполкомĕн председательне.

7. Александр Яковлевич **Пичупекина**—Йĕпреç вăрманхозĕн директорне.

8. Вера Ивановна **Рыжовăна**—Йĕпреç вăрман комбинатĕнчи грузчицăна.

9. Федор Петрович **Синякова**—Йĕпреçри «Кооплеспром» артель столярне.

10. Ксения Васильевна **Ширшовăна**—«Тымар» колхозри ĕне сăвакана.

Малалли пулать.

Мускав облаçĕнчи колхозсенчи комсомол организаци секретарĕсен канашлăвĕ

М. И. Калинин тухса калани

Мускав облаçĕнчи колхозсенчи комсомол организаци секретарĕсен канашлăвĕ пулса иртнĕ.

Облаçри колхозсенчи комсомол организацийĕсен ĕçне лайăхлатмалли мерăсем çинчен ВЛКСМ Мускав область комитечĕпе Мускав хула комитечĕн секретарĕ Красавченко юлташ доклад туса панă.

Доклад тăрăх пулнă пренире комсомол организацийĕсен руководителĕсем Машкова, Шорина тата ытти юлташсем тухса калаçнă, вĕсем колхоз çăмăкĕсем çурăки вăхăтĕнче мĕне ĕçлени çинчен калаçа панă.

Канашлăва пухăннисем Социализмлă Ĕç Геройĕн Д. Н. Прянишников академикăн сăмахне тимлĕн итленĕ. Вăл канашлăва пухăннисене тухăçлă тырпулăшăн кĕрешсе ĕçе вăйлатма чĕнсе калаçнă.

Канашлура ВКП(б) Мускав область комитечĕн секретарĕ Б. Н. Черноусов юлташ сăмах тухса калаçнă. Вăл колхозсенчи комсомол организацийĕсен уйăнчен тырпула пăхса çитĕнтерес тата тырпул пухса кĕме хатĕрленес тĕлĕшпе тăракан задачăсем çинчен тĕплĕн каласа панă.

Канашлăва СССР Верховный Совет Президиумĕн Председательĕ М. И. Калинин юлташ пырса кĕнине канашлура пулнисем тăваллăн алă çупса кĕтсе илнĕ. Залра: «Сывă пултăр Михаил Иванович Калинин! Урра!»—тесе кăшкăрнă сасăсем илтĕнĕ.

Михаил Иванович Калинин канашлура калаçнă сăмаха пурте питĕ тимлĕн итленĕ.

М. И. Калинин юлташ сăмахĕ

— Юлташсем, манăн пĕр ыйту çинче кăна чарăнса тăрас килет. Эсир Мускав облаçĕнчи, столица облаçĕнчи, хут пĕлес тĕлĕшпе, культурăллăх тĕлĕшпе малта тăракан области комсомол организацийĕпе пулса тăратăр. Паллах, Мускав облаçĕнчи комсомолецсем пирĕн Союзри комсомол ретĕнче чи культурăллă комсомолецсем пулмалла. Эсир кашни кунах ĕçре катартса панисем,—ĕçе чун-чĕререн парăнса тата хастарлăн тытăнни, ăмăртура харçăр пулни, патриотизм,—кĕскен калаçан, пирĕн комсомолăн мĕнпур пархатарлă пахалăхĕсем комсомолăн ытти отрячĕсене те тивĕслĕ пулса тăраççĕ.

Анчах столицăри организаци мĕнпе те пулин уйрăмрах пулмалла, унăн мĕнле те пулин столицăри уйрăмлăх пулмалла. Çынсем çапла калаççĕ: столицăра пурăнакан çынăн сăн-сăпачĕ те столицăри пек, вăл провинцилăран кăштах уйрăм тăрать, хăвăртрах тавçăрса илме пултарать тата ытти тĕлĕшпе те уйăрăлса тăрать, тесçĕ. Чăн та ĕнтĕ, эсир Мускавра хăйĕнчех пурăнмастăр, облаçра пурăнатăр, ялхуçалăхĕнче ĕçлетĕр. Çапах та сирĕн, столица облаçĕнчи организаци пулнă май, мĕнпе те пулин уйăрăлса тăмалла.

Сирĕн облаçри комсомол организацинчен, пирĕн Союзри чи культурăллă организацисенчен пĕринчен халăхи вăхăтра мĕн ыйтмалла-ха? Ман шутăмпа,—организацилĕх ыйтмалла. Эпир ялхуçалăхне ытлашши нумай вăй хуратпăр, тесе питĕ тĕрĕс каларĕ Попов юлташ. Сахалрах вăй хунипех халăхи пек мар, пысăкрах результатсем илмелле тăвас пулать. Акă мĕнле задача тăрать комсомол умĕнче!

Хресченсем хушшинче те эсир чи культурăллă çынсем вĕт-ха: эсир çичĕ çул вĕренмелли шкултан, вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Ĕлĕкхи Мускав кĕпĕрнинче питĕ сахал çамрăксем вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Авалхи вăхăтра çамрăксене хут вĕрентес ĕçе Совет власçĕ вăхăтĕнчи пек нихăçан та нумай укçа-тенкĕ паман.

Малалла, воспитани ыйтăвĕпе ĕçе организацилес ыйту çинчен чарăнса тăрса, Калинин юлташ çапла калать:

— Пирĕн задача, хресченсен культурăллă, интеллигентлă сийĕн задачи,—ĕçе план тăрăх туса пыма вĕрентесси, ĕçе йĕркеллĕ те васкамасăр туса пыма вĕрентесси, ăна автоматпа тунă пекех лайăх тата кал-кал туса пыма вĕрентесси пулса тăрать. Ку тĕлĕшпе ĕнтĕ çирĕн питĕ пысăк ĕç тумалла. Шăпах çирĕн организаци ĕнтĕ ку ĕçре малта пымалла.

Йăлана та, ĕçе те культурăллăх кĕртес тени мĕне пĕлтерет-ха вăл?

Комсомол ĕçĕнче организацилĕх пулмалла тени мĕне пĕлтерет-ха вăл? Вăл акă мĕне пĕлтерет: пухусенче ытлашши калаçу таврашĕ пулмалла мар, ыйту лартнă пулсан, вăл ыйту çинчен пĕтĕмпеле мар, конкретнă каласмалла, çав ыйтăва тĕплĕн татса парса, ăна ĕçĕн çитменченех туса пымалла. Тата сакăнаспа тытăр: агитацире те, пухура та, чей ĕçĕ вăхăтра та çын организацилĕх е организацилĕ мар пулни палăрать.

Мускав комсомолĕ, чи культурăллă комсомол, ку задачăна пурнăçа кĕртме пултарĕ, тесе шутлатăп эпĕ.

Комсомол умне ку ыйтăва эпĕ лартнăччĕ, анчах пухусенче тата эсир тухса калаçнисенчен вăл сире пырса тивни палăрмасть-ха. Комсомол çынна йĕркелесе çитерет. Комсомол, кун пек калама май килет пуласан, çынна ĕмĕр тăршшĕ пурăнмалăх никĕс хурса хăварать. Çавăнпа та эсир, комсомола ертсе пыракан çынсем, сирĕн пĕр-пĕр организаци, колхозри е районри организаци, активлă çынсене, Совет государствин ĕçĕн патрикчĕсене çитĕнтерсе кăларать, кĕскен каласан, лайăх çынсене çитĕнтерсе кăларать пулсан та, анчах вăл çынсем организацилĕ мар, хăйсен ĕçне, хăйсен йăлине организацилеме пĕлмеççĕ пулсан, унăн эсир хăвăр çинпе пысăк ответлăх илетĕр.

Çавăнпа та мана çапла шанса тăма ирĕк парăр: Мускаври комсомол организацийĕ ĕçĕн çак енĕ çине тимлĕн çаварăнса пăхсĕ. Ку тĕлĕшпе сире ăнăçусем тумашкăн чун-чĕререн ырă сунатăп.

(Тăвăлăн алă çупаççĕ, пурте тăраççĕ. «Сывă пултăр Михаил Иванович Калинин! Урра!»—тесе кăшкăраççĕ).

* * *

Канашлура ВКП(б) Мускав область комитечĕпе Мускав хула комитечĕн секретарĕ Г. М. Попов юлташ, ВКП(б) Мускав область комитечĕн секретарĕсем Мэксимовна Поздеев юлташсем, ВЛКСМ Центральный Комитечĕн секретарĕсем Ивановпа Мишакова юлташсем пулнă.

Юлашкинчен, ВЛКСМ Мускав область комитечĕн секретарĕ Сизов юлташ СССР Наркомземĕ «Социализмлă ялхуçалăхĕн отличникĕ» значокпа наградăласси çинчен кăларнă приказа тата ВЛКСМ Центральный Комитечĕ колхозсенчи комсомол организацийĕсен лайăх секретарĕсене, ялхуçалăхĕнче малта пыракан комсомолецсене Хисеплĕ грамотăпа наградăласси çинчен йышăннă решение вуласа паратъ.

Канашлăва пухăннисем халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ патне питĕ хавхаланса салам янă.

Российăра сывлăшра вĕçмелли çар хатĕрĕсем тума пуçланăранпа 75 çул тултарчĕ

Июлĕн 12-мĕшĕнче, Б. Н. Юрьев академик ертсе пынипе, Российăра сывлăшра вĕçмелли çар хатĕрĕсем тума пуçланăранпа 75 çул тултарнă ятпа СССР Наука академийĕн техника историйĕ тĕлĕшпе ĕçлекен комиссийĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Комиссин ларăвĕнче авиацине дирижабль тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен паллă деятельсем пулнă: аэростатсем тăвас тĕлĕшпе тахçантанпах ĕçлекен В. Д. Анощенко профессор, Э. К. Бирнбаум тата К. Д. Годунов стратонавтсем, СССР-ри тава тивĕслĕ пилот Б. И. Россинский тата ытти сем те.

Российăра сывлăшра вĕçмелли çар хатĕрĕсем тума пуçланăранпа 75 çул тултарни çинчен инженерипе авиаци службин генерал-майорĕ В. А. Семенов профессор доклад туса панă. Хăйĕн докладĕнче вăл Российăри аэронавтикăн тĕп çитĕнĕвĕсене тата совет вĕçевçисен çитĕнĕвĕсене кăтартса панă. Семенов профессор каланă тăрăх, 1869 çулта, Севастополĕн паллă геройĕ Тотлебен ертсе пынине, çар ведомстви комисси уйăрса хунă. Вăл комиссин çар валли аэростат хатĕрленмелле пулнă. Çаван пек аэростата туса хатĕрленĕ те Усть-Ижорăри сапер лагерьне панă. 1870 çулхи июлĕн 28-мĕшĕне августăн 1-мĕшĕ хушшинче аэростата сăнас ĕçсем вĕçленнĕ. 1908 çулта вырăссен «Учебнăй» ятлă пĕрремĕш дирижабльне тунă.

Хăйĕн сăмахĕнче В. Н. Воробьев металран тăвакан дирижабльĕн пĕрремĕш авторĕ пулса тăракан К. Э. Циолковский ĕçĕсем çав тери пысăк вырăн йышăннине уйрăмăнах палăртса хăварнă. Н. Д. Анощенко профессор совет аэростачĕ 1920 çулта пĕрремĕш хут ирĕклĕн вĕçни çинчен тата граждан вăрçи вăхăтĕнче вĕçевçĕсен отрячĕсем паттăрлăн ĕçлени çинчен каласа панă.

Планран ирттерсе атă-пушмак туса кăлараççĕ

СССР-ăн Çăмăл промышленность Наркомачĕн атă-пушмак тăвакан предприятийĕсем, малта пыраканнисем, çур çулхи плана срокчен тултарса, планран ирттерсе нумай атă-пушмак туса кăларнă. Ленинградри «Скороход» атă-пушмак фабрики. 1945 çулхи март уйăхĕнчен пуçласа Оборонăн Государственный Комитечĕн çурса сӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тытса тăраканскер, июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне планран ирттерсе 146.000 мăшăр атă-пушмак, Микоян ячĕпе тăракан фабрика (Дон çинчи Ростов)—70.000 мăшăр, «Пролетарская победа» фабрика (Ленинград)—43.000 мăшăр, Мускаври 2-мĕш номерлĕ фабрика—38.000 мăшăр атă-пушмак туса кăларнă. (ТАСС).

Тырпул пухса кĕме хатĕр пулар

Елчĕк районĕнчи Тăрмăш ял Советне пурĕ виçĕ колхоз кĕрет. Вĕсем тырпул пухса кĕме ăмăртса хатĕрленеççĕ.

«Новый путь» колхозра (председателĕ Андриянов юлташ) 6 жнейка юсаса хатнă, алăпа выракансем валли 70 сурла шаллаттарса хунă. Государствăна тырă леçме ятарласа бригада тунă, вăл бригадана чи лайăх ăшасем тата 24 урапа çирĕплетсе панă. Урапасене пурне те лайăх юсанă. 120 çĕнĕ михĕ пур. Хирти кĕлтесене итеме турттарма 18 рыдван хатĕрленĕ. Колхоз тырпул пухса кĕртмелли плана сăтсе-явса çирĕплетнĕ. Кашни бригадарах агитаторсем тата стен хăçат редакторĕсем пур.

«Красное знамя» колхозра (председателĕ И. Варламов юлташ) 4 жнейка пур, вĕсем пурте юсавлă. 66 сурла хатĕр. Транспорт инвентарĕсем, ут таврашсем çитĕкленĕ. Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра колхозниксем валли пĕрлешӳллĕ столовай пулать.

«Знамя» колхоза П. Алексеев юлташ ертсе пырать. Ку колхозра жнейкăсем, молотилкăсем, сурла-çăвасем çитĕкленĕ тата вĕсене пурне те юсаса хунă. Кунта кăçал виçĕ витнĕ итем пулать. Вĕсем патне пымалли çулсене юсанă.

П. ЩЕРБАКОВ,
Ял Совет исполкомĕн председателĕ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, июлĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Районра колхозсем утă çулма тытăнчĕç. «Чĕтай» колхозра 60 гектар çулнă. Çак лаптăк çинчи утта вĕсем типĕтсе государствăна пама тытăнă. Ĕнер колхоз чи лайăх типĕтнĕ утта 16 центнер хатĕрлев пунктне леçсе панă.

Утă çуласси «Малалла», «12 лет Октября», «Янмурзино» колхозсенче те аван пырать. Вĕсем кашнисех 30—40-шер гектар çулнă.

«Пахарь» колхоз кăçал та тырпула пухса кĕме аван хатĕрленсе çитнĕ. Пурĕ 3 жнейка юсанă, 15 стан урапа, кĕреплелле çавасем 60 хатĕрленĕ. Халь колхозниксем клевер тата çаран утти çуласçĕ. 10 гектар çинчи клевера çулса типĕтсе капана хывнă.

«Пахарь» колхозăн тырăсем питех те ăнса пулнă. 208 гектар калчана çумкурăкĕнчен тасатнă. Вăрлăх участокĕ çинчи тырра икĕ хутчен çумлана. Июнĕн иккĕмĕш кунĕсенче çĕртме сухине вĕçленĕ. Çĕртме тумалли вырăна пурĕ 3.700 лав тислĕк кăларнă. Çак ĕçсемпе пĕрлех колхозниксем вильăх-чĕрлĕх валли 300 лав ытла çулçăллă апат хатĕрленĕ, ял хушшинче 4 пĕве пĕвеленĕ, арман пĕвине те йĕркене кĕртнĕ. Çапла ĕнтĕ колхозниксем пур ĕçе те вăхăтра туса пырса, кăçалхи ялхуçалăх çулне ăнăçлă рах вĕçлессишĕн тăрашаççĕ.

С. ШАДИН.

Йĕпреç районĕнчи Заготзерно пунктĕ колхозсем обязательство тăрăх паракан тырăсене ниме лайăх хатĕрленет. Кунта пурĕ 9 склад, вĕсенчен 8-ши юсаса дезинфекциленĕ. Çак кунсенчех ялашки склада та юсаса пĕтереççĕ. Тырă турттармалли 12 тарасана тĕрĕлессе клеймо çаптарнă тата тырă турттармалли выраçсене вырнаçтарса лартнă. Чĕрĕрех пĕтсе тинĕтме кăçал ятларласа сушилка тунă. Çавăн пекех складсен заведующийĕсене, тырă йышăнакансене, склад хуравçисене пурне те тупса ситернĕ тата складсем çумне çирĕплетнĕ.

Вут-кавартан сыхланас майпа склад таврашĕсене 12 пысăк чан çĕре лартса лартнă. 12 насоса юсаса хатĕрленĕ, лакурсем, пуртăсем тата пушпа хинĕç керешмелли ытти хатĕрсем те çителекле.

Тырă илнĕ вăхăтра Заготзерно пунктĕнче хĕрлĕ кĕтес пулать. Хĕрлĕ кĕтес çумне çирĕплетнĕ агитаторсем колхозниксене çĕнĕ хăçат журналсем вуласа параççĕ, тĕнчери лару-тăру çинчен калаçусем йĕркелеççĕ. Тырă пама килекен колхозниксем валли уйрăм столовай пулать.

П. КУРАКОВ.

* * *

ÇĔРПӲ. «Хĕрлĕ Тивĕш» колхоз районра ытти колхозсенчен малтан утă çулма туха пашкăн кунă 35 гектар çулнă.

«Балтиец», «Пионер» колхозсенче те утă çулма туха пĕр кун хушшинче 20-шер гектар çулнă.

«Хĕрлĕ Тивĕш» колхозра утта çулнă хыççăн çийĕнчех типĕтсе капана хывăççĕ. Мĕн пурĕ кунта 30 гектар çинчи утта типĕтсе пуçтарнă.

* * *

МУРКАШ. Кутузов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Чăваш республикин юбилейне ĕçри çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илчĕç. 79 гектар тырра çумкурăкĕнчен тасатнă, вăрлăхлăх хăвăрнă участока комсомолецсемпе çамрăксем иккĕмĕш хут çумланă. Ун 750 лав тислĕк кăларнă, çĕртме сухи туса пĕтернĕ.

Колхоз тырпул пухса кĕртмелли ялхуçалăх машинисене юсаса пĕтернĕ.

И. ВОЛКОВ,
И. ТИХОНОВ.

* * *

Çичĕрту Чапаев ячĕпе тăракан колхоз (Октябрьски район) тырпула пухса кĕртме хатĕрленнĕ май пушпара хирĕç керешес ĕçе те тимлĕн туса пырать. Колхозри пушпăна кĕрешекен ушкăнăн членĕсене кашнине харпăрлăх тумалли ĕçсене уйăрса панă. Пушпăн хатĕрĕсем лайăх та тирпейлĕ тăраççĕ. Насоссем лайăх ĕçленине ĕçлеменнине кунта тĕрĕслесех тăраççĕ. Пушпăн сарлаве патĕнче икĕ лапа ялăнах хатĕр тăраççĕ. Кĕлте кӳне чух тата аван çапнă чух итем çинче шывпа чансем тата насос та пулать.

М. ВАСИЛЬЕВ.

Хытă чупакан лашасен ăмăртăвĕ

Чăваш республики 25 çул тултарнине уявлăнă кунсенче Шупашкарти ипподромра хытă чупакан лашасен республикăри ăмăртăвĕ пулса иртрĕ.

Ăмăртăва пурĕ 39 лапа хутшăнчĕ, вĕсенчен 31 лапи—колхозсен, саккăрĕшĕ —Сăр шывĕ леш енчи заводăн.

Пурĕ 14 хут чупса ăмăртнă. Çак ăмăртусене хутшăннă лашасем 7200 тенкĕлĕх приз илнĕ. Вĕсенчен пĕр призĕ —1500 тенкĕ, тепĕр призĕ 1000 тенкĕ.

Ăмăртăва килнĕ лашасем пурте таса, мăнтăр тата хытă чупаççĕ.

Малтанхи чупура Сăр шывĕ леш енчи лапа завочĕн «Дипломатия» ятлă кĕсри, Етĕрне районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозăн «Кама» ятлă кĕсри, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Шордан» колхозăн «Нăрзан» ятлă хура ăйăрĕ пулчĕç. «Нăрзан» финиш юпи патне чи малтан çитрĕ. «Нăрзана» Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн главнăй ветеринарнăй врачĕ Васильев юлташ ларса тытса пычĕ. 1600 метра «Нăрзан» 2 минут та 40,6 секундăра чупса тухрĕ.

Иккĕмĕш чупура Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозăн «Зимний ветер» ятлă ăйăрĕ тата Çĕрпӳ районĕнчи «Красные Тиуши» колхозăн «Лоскут» ятлă ăйăрĕ пулчĕ. «Лоскут» ятлă ăйăр 1600 метра 2 минут та 34 секундăра чупса тухрĕ. «Лоскута» Çĕрпӳ районĕнчи старши ветеринарнăй врач Боровков юлташ ларса тытса пычĕ.

Виççĕмĕш чупăва «Задор», «Сигнал», «Зайсан» тата «Зарок» ятлă лашасем хутшăнчĕç. Етĕрне районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозăн «Сигнал» ятлă ăйăре пĕремĕш вырăна тухрĕ, вăл 1600 метра 2 минут та 54 секундăра чупса тухрĕ. «Сигнал» лапана Етĕрне районĕнчи лашасем енĕпе ĕçлекен зоотехник Токсубаев юлташ ларса тытса пычĕ.

Чăваш республики 25 çул тултарнă ятпа тунă призăн Çĕрпӳ районĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхозăн «Скандал» ятлă ăйăрĕ. Сăр шывĕ леш енчи лапа завочĕн «Платина» ятлă кĕсри, Етĕрне районĕнчи «Борец» колхозăн «Аван» ятлă ăйăрĕ ăмăртрĕç. «Скандал» ятлă ăйăр 1600 метра 2 минут та 30 секундăра чупса тухрĕ, малти вырăна йышăнчĕ.

Совет Союзăн Геройĕ Боголюбов генерал-полковник ячĕпе тăракан призăн чи хытă чупакан лашасем ăмăртăва тухрĕç. Сăр шывĕ леш енчи лапа завочĕн «Чижик» ятлă ăйăрĕ тата «Малина» ятлă хура кĕсри. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн «Запрет» ятлă ăйăрĕ ăмăртрĕç. Финиш юпи патне чи малтан «Малина» çитрĕ. Вăл Шупашкарти ипподромра çĕнĕ рекорд турĕ: 1600 метра 2 минут та 22 секундăра чупса тухрĕ.

«Малина» 1937 çулта çуралнă. Ăна Устинов юлташ ларса тытса пычĕ. Иккĕмĕш вырăна «Чижик» тухрĕ, ăна Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн лашасем ĕрчетес енĕпе ĕçлекен Управлени начальникĕ М. Мельников юлташ ларса тытса пычĕ.

Ытти чупусенче Çĕрпӳ районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн «Запрос» ятлă ăйăрĕ, Çĕрпӳ районĕнчи «Новая жизнь» колхозăн «Сигнал» ятлă лашисем çĕнĕре